Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен,
информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви
Чăваш Республикин Наци библиотеки
Чăваш наци литературипе библиографи пайĕ

# «Шухăшсем, шуратрăр сăнăма…»

## Ваçлей Митта çуралнăранпа 100 çул çитнĕ май литература каçĕн сценарийĕ

Шупашкар 2008

Редакци совечӗ:
Г. П. Соловьева;
Н. Т. Егорова
Р. Н. Глухова

Кăларăмшăн яваплă:
Г. П. Соловьева

Хатӗрлекенӗ: А. Ю. Павлова

«Шухăшсем, шуратрăр сăнăма…» : В. Е. Митта ҫуралнăранпа 100 ҫул ҫитнӗ май литература каҫӗн сценарийӗ / Чăваш Республикин Наци библиотеки ; хатӗрлекенӗ А. Ю. Павлова. – Шупашкар, 2008. – 21 с.

Компьютерпа пичетлекенӗ: А. Ю. Павлова

© Чăваш Республикин Наци библиотеки

**«Шухӑшсем, шуратрӑр сӑнӑма…»**

Ваçлей Митта çуралнӑранпа 100 çул çитнӗ май литература касӗн сценарийӗ

*Поэтӑм, вилӗме ан асӑн,*

*Çак пурнӑç – ӗмӗрхи илем.*

*Кунçулӗ кӑлӑх пулмасассӑн,*

*Вилсен те пурӑнать этем.*

*В. Е. Митта*

*Вулавӑшӑн хӑтлӑ пӳлӗмӗнче паллӑ поэтӑн пурнӑçӗпе пултарулӑхне халалланӑ кӗнеке выставки, стенд йӗркеленӗ. Чуна канӑçлӑх кӳрекен чӑваш кӗввисем янӑраççӗ е Митта Ваçлейӗн юратнӑ Генрик Венявскин «Полонез «Прощание с Родиной» кӗввине шӑппӑнрах яма юрать. Çавра сӗтел хушшинче чӑваш тумӗ тӑхӑннӑ çамрӑк Митта ларать, сӑвӑсем çырать.Пӳлӗмре пианино ларать (Ӑна витсе хунӑ).*

*<u>Хутшӑнакансем:</u>*

- *1-мӗш ертсе пыракан*
- *2-мӗш ертсе пыракан*
- *Митта сӑнарӗ*
- *Илемпи (Митта хӗрӗн сӑнарӗ)*
- *Нона Кирилловна Еремеева-Митта сӑнарӗ (Митта мӑшӑрӗн сӑнарӗ)*
- *Сӑвӑ вулакансем*

**1 е. п.** Ырӑ кас пултӑр, хаклӑран та хаклӑ тус-тантӑшсем, хӑнасем, ырӑ çыннӑмӑрсем! Кӑçалхи çул пирӗн республикра ыр ӗçсен çулӗ. Ак мӗнлерех çырнӑ хӑйӗн «Кун кӗнекинче» ырӑ ӗç тӑвас пирки чӑваш поэчӗ Митта Ваçлейӗ.

**Митта сӑнарӗ:** Çыннӑн чи пысӑк ӗçӗ çынна ырӑ тӑвасси мар, çынна усал тӑвасран хӑйне хӑй чарасси. Эпӗ кирек мӗнле çынна та çапла каласшӑн: эсӗ мана ырӑ ан ту, анчах мана усал тӑвасран хӑвна ху чар («Кун кӗнекинчен»).

**2 е.п.** Кам – ха вӑл Митта? Хӑш тапхӑрта пурӑннӑ, кампа туслашнӑ, мӗнле ун пурнӑç шӑпи?

**1 е. п.** Геннадий Волков ӑсчах, этнопедагог палӑртнӑ тӑрӑх: «Митта Ваçлейӗ хӑйне евӗр сӑвӑç, хӑйне евӗр çын, хӑйне евӗр шухӑшлавçӑ, хӑйне евӗр сӑмах ӑсти пулнӑ. Вӑл

сăвă çыракан мар, вăл чăн-чăн сăвăç, тивĕçлипе паян кунччен те хаклайман пысăк поэт пулнă. Сăвă унăн ĕçĕ мар, унăн сывлăшĕ, унăн пурнăçĕ, унăн чĕре таппи пулнă. Вăл çырмасăр пурăнма пултарайман, мĕншĕн тесен виçесĕр пултарулăх ăна самантлăха та канăç паман».

**2 е. п.** Чăваш халăх писателĕ Илпек Микулайĕ çапла каланă: «Ун пеккине хак хумаççĕ, хакран пин хут çӳлтеччĕ вăл. Кăвар чĕреллĕ сăвăçă, вăл тăван халăхăн ăс-хакăл мулĕнче чăн çӳлти шайра тăратчĕ.Çепĕç лирик, шухăш пăлхавçи, сократла философ – ăçтан кăна тупса çитернĕччĕ-ши этем ĕмĕртен-ĕмĕре йăлана кĕртсе шăнăçтарнă çивчĕ ăс-хакăла?»

**1 е. п.** Митта сăнарĕ енне пăхса:

Кунта – ху вăйлă пулнипе янтрарăн,
Ху çутуна, таса ăспа çĕнсе,
Ху илемне кăтартрăн… Ку çеç мар-и:
Эс, халăх кăмăлне, чунне пĕлсе,
Ху çутуна ун сăнĕшĕн упрарăн.
Ăна вăй пур таран илем кӳрсе.

**2 е. п.** Çапла çырнă чăваш халăх поэчĕ Геннадий Айхи Митта Ваçлейĕн обществри пĕлтерĕшне палăртса.

**1 е. п.** Юратнă поэтăмăра халиччен нумай япалапа танлаштарса, пысăк ят парса пахаларĕç. Акă хăшĕ-пĕрисем: пысăк художник, хăй евĕрлĕ шухăшлавçă, çепĕç лирик, шухăш пăлхавçи, сократла философ, Шевченко пек таса, халăхăн паттăр ывăлĕ, тӳрĕлĕх салтакĕ, сӳнми кăвайт, алмаз пек вичкĕн, çутă çăлтăр, çырулăхри юман юпа.

**2 е. п.** Чăваш литературинче Митта Ваçлейĕ тĕрлĕ жанрпа çырса тарăн йĕр хăварнă. Вăл çырнисем 1920-мĕш çулсен вĕçĕчченех критиксене хытă калаçтарма пуçланă, вĕсене кĕçех вĕрентĕ кĕнекисене те кĕртнĕ.

**Митта сăнарĕ:**

Хаклă чăваш çынни – хамăн тăван,
Юрлам халĕ сана юррăма,
Йывăр ĕçре сана йăпатмашкăн
Кăларам-ха хĕрӳ сăввăма.

**1 е. п.** Василий Егорович Митта 1908 çулхи мартăн 5-мĕшĕнче Чăваш Республикин Патăрьел районне кĕрекен Аслă Арапуçĕнче (хальхи Первомайски ялĕ) çуралнă.

**Митта сăнарĕ:**

Сиктермерĕн мана кĕленче сăпкара,
Макăрсан пыл хумарăн тута-çăвара.
Анчах сансăр пуçне, ыр çĕршывăм,
Тĕнчере чи хакли тек пур-ши вăл?..

**2 е. п.** Çапла, çăмăл пулман поэтăмăрăн çамрăклăхĕ. Ачалăхĕпе яшлăхне шутламасан, поэт пурнăçне икĕ пĕр тан пая уйăрма пулать: вунçичĕ çул (1924-1937 тата 1954-1957) – литературăри пултарăвĕ, тепĕр вунçичĕ çулĕ (1937-1954) – Сталин лагерĕсемпе пуç янă вырăнсем. Халран кайнă этеме 1947-1949 çç сывлăш çавăрса илме панă пек ирĕке кăлараççĕ, унтан каллех – этапсем, Сталин лагерĕсем.

**1 е. п.** Ваçлей Митта, чи малтанах, çырма-шырама пикеннĕ-пикенменех революциллĕ авангард поэчĕн Çеçпĕлĕн ĕçне малалла тăсакансен ретне тăрать. 1924 çултан пуçласа вăл республикăри хаçат-журналта анлăн пичетленет. Вулакана унăн чарусăр уçă кăмăлĕ, сăввисен чĕрене пырса тивекен лиризмĕ, туйăмсем кĕтмен çĕртен каплана-каплана килни килĕшет.

Çамрăк чăваш поэчĕсене «ылтăн кăтраллă ывăлĕн, йывăç пӳртлĕ Раççей юрăçин» Сергей Есенин сăнарĕпе пултарăвĕ илĕртет: «Выткался на озере алый свет зари...» тата ытти те. Çакăн евĕрлĕрех йĕркесем Митта çырнисенче те тĕл пулаççĕ.

**Митта сăнарĕ:**

Пурте, пурте пĕртен-пĕр тивĕç
Сăввăн ылтăн чĕлхи-çăварне.
Ун хăвачĕ стихийăран çивĕч,
Уншăн пур вăй-хăват та – парне.

* * *

Поэт ак тытрĕ сăрнайне...
– Кĕрле, пăлхавăрлă сăрнайăм!
Çĕнĕ çĕршывăн çĕн туйне
Чи чаплă хăна пек эс кайăн.

**2 е. п.** Поэтăн çырма пуçланă тапхăрĕ вăраха кайман. Ăнкаруллă çамрăк сăвăсене ачаран тенĕ пек чунтан юратнăскер, поэзи мĕн иккенне часах чухласа илнĕ. Пуçласа çырнă сăввисем унăн чиперех шăранса тухнă. Вăл вăхăтри журналсемпе хаçатсенче пичетленсе пынă сăвăсемпе танлаштарнă çĕрте, вĕсем начаррисен шутĕнче пулман. Çирĕме те çитмен поэтăн ячĕ çыракансем хушшинче кăна мар, вулакансем хушшинче те хăвăртах паллă ят пулса тăнă. Вăл вара пирĕн литературăна яланлăхах кĕрсе юлнă.

**1 е. п.** Вулакансем, тăван литературăна юратакансем Митта Ваçлейĕн пултарулăхне нимрен ытла «Кăмăл» (1932 ç.), «Кăмăлтан» (1956 ç.) сăвă кĕнекисем, очерксен сборникĕсем тата нумай куçарусем урлă кăна пĕлеççĕ. Чăн та, сахал пек туйăнать. Поэт хăй пурăннă вăхăтра хăйĕн çырнисене пĕтĕмпех пухса пысăк кĕнеке кăларма ĕлкĕреймен.

**Митта сăнарĕ:**

«Ун чухне эп, хам комсомолец пулнă май, Александр Безыменскипе Александр Жаров сăввисене юратарах параттăм, çырасса та вĕсем майлă çырма пăхаттăм. Есенинăн чуна пырса тивекен чипер сăввисем те мана илĕртетчĕç. Сăмаха тӳррĕн калас тетĕп, литературăра хамăр пек пурнăç шайĕпе çирĕпленсех çитеймен çамрăксемшĕн Есенинăн тӳнтерле-инкеклĕ çырнă сăввисем те чĕре патне пыратчĕç».

**2 е. п.** Телее пула, çак тапхăр Митта Ваçлейĕн вăрăма тăсăлман. Кирек хăш писателĕн пурнăçĕ, пултарулăхĕ литературăн мĕнле кĕрешĕвĕсем витĕр пынă çулне кăтартса парать.

Поэтăмăр хăй йăнăш çулпа чуптарнине часах туйса илет. 1928 çултах вăл «Çĕнĕ тупа» ятлă сăвă çырать. Вăл сăвăра Митта Ваçлейĕ хăйĕн йăнăшĕсем çинчен уççăнах калать:

**Митта сăнарĕ:**

… Каçар, каçар, хĕвелĕмĕр!
(Çамрăккипех пуль çав)
Хальччен те сас килмерĕ-мĕн
Мăнтарăн сăвăça.

**1 е. п.** Ку вăл хăйĕн çинчен каланиех пулать. Тепĕр сăвăра поэт тус-тантăшĕсене питĕ ăслă канаш парать.

**Митта сăнарĕ:**

Выçвар кĕвви калан юрра,
Поэтăм, пăрахар.
Уксах ура вăйлă туйра
Ташламĕ вăрахах.
Кăвак пĕлĕтĕн чатăрĕ
Хĕвелшĕн уçăлсан –
Поэт! Поэт! Эс çав тери
Шӳтле ан хуçăлсам.

**2 е. п.** Пурнăçа чунтан юратни, пултарулăха çĕнтерӳллĕ вăй-хăват вырăнне хурса хисеплени – акă мĕн хавхалантарать поэта. Альберт Канаша парнеленĕ сăввинче вăл çак шухăша халăх сăмахлăхĕн формипе, кĕскен, витĕмлĕн каланă.

**Митта сăнарĕ:**

- Манран вăйли мĕн пур?..
Эп – чир,
Эп – тыткăнлăх,
Эп – çуклăх, -
Тесе мухтаннă, тет, Хĕнхур.
- Тĕнче ылханĕ, кай, ан çулăх!
Эп пур çинче – эс çук тек урăх!
Эп – çил,
Эп – ирĕклĕх,
Эп – пурлăх,
Эп – санăн вилĕмӳ, Хĕнхурлăх, -
Тесе каланă Пултарулăх.

**1 е. п.** Çăмăл пулман поэтăмăрăн пурнăçĕ. Çын элекне пула вăл Сталин лагерĕсенче 17 çул чăтса-тӳссе ирттернĕ. Митта Ваçлейне 1937 çул вĕçĕнче сăлтавсăр арестлеççĕ. Ăна Шупашкар, Улатăр тĕрмисенче, вăрах вăхăт хушши Горький облаçĕнче тытаççĕ. Çак çулсене аса илсе поэт мăшăрĕ Нонна Кирилловна Еремеева-Митта çапла çырнă:

**Н.К. Еремеева-Митта сăнарĕ:** *«Ваçлее 1937 çулхи декабрĕн 18-мĕшĕнче тытса кайрĕç. Килессе çĕрле, вуниккĕсенче, килчĕç. Тӳрех «пăшал пур-и?» тесе ыйтрĕç. Вăл*

*шăпах темĕскер çырса ларатчĕ: «Çук ман нимле пăшал та, ак çак ручка ман пăшалăм!» Пĕтĕмпех ухтарчĕç, сапаларĕç, пăтратрĕç. Унăн мĕнпур кĕнекине, вырăсла, чăвашла хучĕсене илсе кайрĕç. Пирĕн ун чухне «Калевалăн» çав тери чаплă томĕ пурччĕ. Ваçлей тин çеç туяннăччĕ. «Калевалăна» та йăтса кайрĕç. Ун чухнех М. Горькин «Окуров городокне» куçарнин алçырăвĕ те çухалчĕ. Ахăртнех, хăйсен килĕсенчи библиотекăсене пуянлатрĕç-тĕр. Эп пĕр чарăнми «мĕн туса хутăн эс» те «мĕн туса хутăн эс» тетĕп. Вĕсем: «Хăй мĕн туса хунине вăл хăй те пĕлмест»,- теççĕ сўрĕккĕн. Ухтарнă чухне уйăрса илнĕ япаласене çыхма кантра тавраш ыйтрĕç. Кантри тупăнмарĕ. Вара эп вĕсене хура хăю сĕнтĕм. Малтанах килĕшмерĕç, анчах кайран çав хăюпах туртса çыхрĕç япалисене. Ун чухне темшĕн ытла та ăшăччĕ. Картишне тухрăмăр. Шыв юхать. Кўлленчĕксем тăрăх Ваçлей кăçатпах утса кайрĕ.*

*Ăна Карл Маркс урамĕнчи 26-мĕш çуртран, Госбанка хирĕçскертен, тытса кайрĕç. Каярах Ваçлей банка кĕмелли вырăна Некрасов сăввинчи чаплă алкумпа танлаштаратчĕ…*

*Пĕр-ик эрнерен «каçхи хăнасене» урамра тĕл пултăм. «Митта ăçта?» - тетĕп. Пĕр сăмах та чĕнмерĕç, нимĕн те пулса иртмен тейĕн. Пăрăнса утрĕç.*

*Кайран тин, январьтеччĕ пулас, эп ăна çав-çав кун НКВДăн следстви тĕрмине куçарса пырассине пĕлтĕм. Эп унта çитнĕ çĕре унта çынсем – Краснов-Аслипе ытти паллант çынсен арăмĕсем – тăраççĕ. Вĕсем те кĕтеççĕ. Акă Ваçлее турттарса килчĕç. Вăл тухрĕ, анчах унпа юнашар – виç-тăватă милиционер. Хăй пĕрмай ман еннелле пăхать, утнă хушăрах урине çĕклет те кăçаттин тĕпне аллипе кăтартать. Çук, ăнланмарăм эп вăл мана мĕн каласшăн пулнине, кăçатти те вĕр-çĕнĕччĕ те. Кайран тин вăл хăйне этаппа ăсатни çинчен пĕлтерни пуçа пырса çапрĕ».*

**Сăвă вулакан:**

Çăлтăр витĕр çул курăнать,
Куççуль витĕр кун курăнать…
Çунатăм, юлатăн. Ан макăр.
Салтак пек маттур уйрăлар.
Ман çул – çăлтăр витĕр – тап-такăр,
Ман çул – куççуль витĕр – уяр.

Пире çурçĕр çилĕ ыталĕ,
Ачашлĕ кăра шартлама.
Çуталĕ жандармăн медалĕ,
Вăл памĕ çулра аташма.
Спасибо! Савса ывăлларĕ
Мана Сармантей самани.
Юрлар-и, кулса уйрăлар-и?
Тен, ĕмĕрлĕхех… чун савни!..

*(Митта Ваçлейĕ «Пуç янисен юрри»)*

**1 е. п.** Митта Ваçлейĕ мăшăрĕ патне 1944 çулхи сентябрĕн 10-мĕшĕнче янă çырура (тытса кайнăранпа 7 çул иртнĕ хыççăн) çапла çырнă

**Митта сăнарĕ** *(тĕп герой сăнарне тĕрмери тапхăрти пек гримламалла): «Таврăнатăп эп вăрă-хурах пек, ĕмĕрлĕхе чун канлĕхне çухатнă çын пек, çын çине тӳррĕн пăхма пултарайманскер, хастарлăха, хăюлăха çухатнăскер. Çакăн пек çын упăшка пулма пултараймасть, пулсан та – килйыша телейлĕ тума хăват çитереймест. Ун пек çынпа çемье канăçлăх мĕнне пĕлес çук, ун пек çыншăн ыран куна нимĕнле гаранти те çук, астăватăн пуль 1937-мĕш çул апрель уйăхĕнчен пуçласа иксĕмĕр мĕнле пурăннине. Пĕр каç та асаплă кĕтӳсĕр иртместчĕ вĕт. Сана тата ăса кĕре пуçланă ачасене çавăн пек шанчăксăр пурнăç парасшăн мар эп ӳлĕм».*

*(...) Паллах, вăрçă хыççăн пире кунта тытас çук. Эпир таврăнăпăр. Хам валли эпĕ пĕр-пĕр аякри кĕтесе суйласа илĕп, Чăваш тĕпелĕнче мар, кĕтмен тата паллă мар хăнасем ларакан çĕре вырнаçăп, ятсăр тарçă пек кунĕн-çĕрĕн ĕçлĕп, анчах хамăнне тăвăп!».*

**2 е. п.** Çав çырăвĕнченех Митта çапла çырать

**Митта сăнарĕ:** *«Асран кайми юлташăм! Тин çеç ĕçрен ĕшенсе таврăнтăм, алăран кăранташ ӳкет, анчах май килнĕ чух тахçанах каламалли сăмахсене каламасăр хăварас мар тетĕп. (...) Çичĕ çул… вĕсем маншăн пĕр усал хура кун пек, ниепле вăранаймасăр куракан асаплă тĕлĕк пек. Çав вăхăтрах эпĕ сирĕнтен ĕнер çеç уйрăлса тухнă пек, тин çеç, ĕнер çеç пек. Вăл ĕнтĕ манăн пурнăçăм пулăм тĕлĕшĕнчен пушă иккенне пĕлтерет, ирĕкре кашни кунăн хăйĕн туйăмĕ, творчествăллă содержанийĕ пур, кашни кун –*

*пархатарлă çыншăн пултаруллă ĕç этапĕ, кунта вара йăлтах урăхла, вăхăт калама çук тăрлавсăр иртет, пĕр кун – тепĕр кунăн копийĕ, эпир кунта, выльăхсем пек, вăхăтлăх туйăмне çухатнă, çавăнпа та сиртен уйрăлни ĕнер çеç пек туйăнать. Анчах вăл апла мар иккен, хамран пилĕк çулта юлнă Нарспи паян çитĕнен çын сассипе калаçать, вăл ĕнтĕ ăраскалсăр ашшĕне хăш чухне питлесе илмелĕх те пулнă.*

*Нонна, ну мĕн сана çырам? Эпĕ санпа калаçма та тивĕçлĕ мар. Çын-и вăл, айăпсăр пула тăркач, хăйĕн айăпсăрлăхне кăтартса пама пĕлмен çын çын-и вăл? Халь ĕнтĕ урăх ун çинчен тапратмăпăр, кая юлчĕ. Эпĕ айăплă! Эпĕ айăпсăр тесен, мана тăван анне те ĕненес çук. Эпĕ айăплă – хам айăпсăрлăх çинчен çынна ĕнентерме пултарайманнишĕн, çавна пула çакă çичĕ çул хушшинче тăван чăваш халăхĕшĕн пĕр шăрпăк та усă кӳрейменнишĕн, сире çакăн пек телейсĕр тунишĕн, юлашкинчен – тăватă тăванăм пек çак ахăрсаманара пуçа хурайманнишĕн. Мĕн чухлĕ калас сăмах, мĕн чухлĕ тăвас ĕç çухалчĕ, мĕн чухлĕ çутă ĕмĕт сая кайрĕ ман çак çичĕ çул хушшинче!».*

**Сăвă вулакан:**

Тап-тап пусса, кал-кал утам-и,
Кисрентĕр цементлă урай.
Çĕлен пек сăнчăрăн ытамĕ
Ан пустăр шăнăра пĕрмай.
Ăçта эс, вутлă чăн сăмахăм,
Илемӳпе мана çутат! –
Çапла вăл тăлăххăн-хăраххăн
Кун-кунласа утать, утать…

**2 е. п.** Автор кунта сăвă йĕркисене вĕçленмен «Тайăр» поэма геройĕпе çыхăнтарнă пулсан та, сăвăçăн хăйĕн кун-çулĕн паллисем уççăнах курăнаççĕ.

**Митта сăнарĕ:**

Е кĕтнĕ кун çитес пулсан пĕр те пĕр,
Эп çунăп иртнĕ хĕрӳпех, -
Ăмăртăва тухан яш кĕрĕм евĕр,
Вăй-кил кӳртен мăн кĕрӳ пек.
Эп таврăнăп йăвашшăн та хаяррăн,

Çĕршыв туй-çуй тапратнă чух.
Хавхаланаллă такмаксем хайларăм,
Туй намăсне ярассăм çук.

**1 е. п.** Айăпсăр айăпланнă сăвăç çирĕм çула яхăн пĕр йĕрке те çырса пичетлеймен. Поэтшăн çакă чăн та чи пысăк хурлăх.

**2 е. п.** Митта Ваçлейне йывăр самантсенче мăшăрĕ, тăванĕсем, юлташĕсем пăрахман, вăй парса тăнă. Еплерех асăнать-ха поэтăмăр чи çывăх юлташĕ Петĕр Хусанкай пирки? *(Экран çинче П.Хусанкай портречĕ)*

**Митта сăнарĕ:**

Кам тӳссе ирттерчĕ çынпа тан,
Кам ырра усал теме хăймарĕ,
Усала айваннăн пуç таймарĕ,
Çав калатăр пĕтĕм кăмăлтан:
Çамрăк ĕмĕр харама каймарĕ.
Пултаруллă тусăм! Тав сана!
Эп кунта вунçичĕ çул пулмарăм,
Пуласса та, ахăртнех, сунмарăм,
Анчах сан тивлетлĕ сăнарна
Чĕрĕ халлĕн чĕрĕмре упрарăм.
Вăй параттăн, ывăнса çитсен,
Сас параттăн, шухăша кайсассăн,
Е хĕвеллĕ çумăр пек ачашшăн
Ислететтĕн чун типсе килсен…
Ахаль мар эп тайăлса каласшăн:
Чăвашсен пĕр лайăх сăмах пур –
Юлташ пултăр хăвăнтан маттур!

*(Митта Ваçлейĕ «Тав сана!»)*

**1 е. п.** Митта Ваçлейĕ П. Хусанкай патне янă çыруран:

**Митта сăнарĕ:** «*Тантăш Хусанкай! Санăн чĕрӳнти сăмахусене эпĕ нихăçан та манас çук! Епле эс мана ăс парса вĕрентнисем халь те çамрăк чĕреме, пуçăма çĕмĕрсе тăраççĕ.*

*Ан пăшăрхан, тантăш! Малашне эсĕ те пĕччен пулмăн! Пĕччен çеç хăвăн савăнăçна, çавăн пекех хăвăн хуйху-суйхуна юрламăн. Сана юлташ каллех хĕрӳ чĕреллĕ чăваш-пулхăр йăхĕнчен çуралнă ывăл-хĕрсем сиксе тухĕç! Ăна эс шанса тăр!..*»

**2 е. п.** Петĕр Хусанкай юлташĕ пирки çапла çырса хăварнă: «*Халăх чĕлхи, наци сăн-сăпачĕ, сахал сăмахпа нумай калама пĕлни, таса кăмăл, вĕри чĕре таппи, тарăн шухăш – акă мĕн туять вулакан Митта сăввисенче. Шăратса хывнă йĕркесем, сăвăсерен тĕрлĕ кĕвĕ, тĕрлĕ çавра темелле, тулли рифма – çак пурте хăй тĕллĕн тухса пынă пек, «чун тарĕпе» ĕçлени сисĕнмест, мĕншĕн тесен сăввăн тĕп шухăшĕ, шалти тасалăхĕ кăмăла çавăрать*».

**1 е. п.** Митта Ваçлейне юлташĕсем ырăпа асăнаççĕ. Василий Давыдов-Анатри аса илĕвĕнчен: «*Митта Ваçлейĕ – пирĕн ял çынни. Çавăнпа та эпĕ ăна мĕн ачаранах лайăх пĕлнĕ. Ку çеç те мар, поэт мана литература çулĕ çине тăма пулăшнине те ырăпа асăнмасăр иртсе кайма пултараймастăп*».

**2 е. п.** Геннадий Айхи Митта Ваçлейĕ çинчен çапла йĕркесем шăрçаланă:

Кунта – хăв вăйлă пулнипе янтрарăн,
Ху çутуна, таса ăспа çĕнсе,
Ху илемне кăтартрăн… Ку çеç мар-и:
Эс, халăх кăмăлне, чунне пĕлсе,
Ху çутуна ун сăнĕшĕн упрарăн.
Ăна вăй пур таран илем кӳрсе.

**1 е. п.** 1947 çул вĕçĕнче Митта Чăваш çĕршывне таврăнать, анчах ăна литературăпа культура ĕçне явăçтарма шанмаççĕ. Вара вăл тăван районĕнчи тĕрлĕ ялсенче учительте, бухгалтерта, уй хуралçинче ĕçлет.

**2 е. п.** 1949 çулхи ака уйăхĕнче ăна каллех арестлеççĕ те Красноярск крайĕнчи Мăн Муртта районне ăсатаççĕ. Кунта вăл 1954 çулхи хура кĕркуннеччененех пурăнать, тĕрлĕрен вак-тĕвек ĕçре тăрать.

**2-мĕш сăвă вулакан:**

Каясси ман каллех – вăрăм çул,

Курасси ман каллех - темĕн чул…

Тусăм, тусăм, мĕн пулчĕ? Мĕн килчĕ?

Тĕрĕс-тĕкĕл пурнар тенĕ чух,

Ак каллех уйрăлмашкăн тĕл килчĕ…

…Кама калăп хам хуйхăм çинчен?

Кама чĕнĕп чĕлхем çĕтиччен?

Кăлăх пулĕ – сассăм пăчланĕ.

Анăçран тухăçа çитиччен –

Хырлăх мар-мĕн – хурлăх вăрманĕ.

Çитĕ вăхăт, мана манăçа

Эс хăварăн. Пурнан пурнăçа

Кайăкла ирттерме çтан пултарăн?

Эпĕ панă айван шанăçа

Шур пӳспе чĕркесе эс пытарăн.

Эп çапах, хам пуçтах пуçăмпа,

Утăп, утăп асаплă çулпа –

Чăтлăхсем, шыв-шурсем, тусем урлă…

Çтан чĕнен сана, тусăм, хампа:

Инçе çулăм ытла та хĕн-хурлă!..

*(Митта Васлейĕ «Элеги» сăввинчен)*

**1 е. п.** ««Культ киреметне» пула алла хут-кăранташ тытайман сăвăç инçетре те, питĕ йывăр самантсенче те, тăван литературăшăн çунма пăрахман. Вăл темле майпа чăваш хаçат-журналне тупса вулама пултарнă, пирĕн литературăра ĕлĕкрех палăрнă писательсемпе пĕрле çамрăккисемшĕн те ӳссе пынишĕн пĕтĕм чун-чĕререн савăннă», - тесе çырнă Александр Артемьев хăйĕн «Пурнăç чăнлăхĕпе писатель ăсталăхĕ» кĕнекинче.

**2 е. п.** Митта сăмах илемне çав тери аван туйнă. Паянхи поэтсем валли хывнă халалĕ çапла янăрать:

**Митта сăнарĕ:**

Хĕн-хурлă пултару саманчĕ,

Ăна пĕлмен поэт – айван.

Сăмахăн асапне чăтман çын

Нихçан та сăвăç пулайман.

Чун тарĕпе тухман сăмахăн

Пăшал тытмалăх çук вăй-тар.

Ан ут, поэт, уксах чăлахăн,

Сан аллăнта шакăртма мар.

*(Митта Ваçлейĕ «Çĕнĕ çĕртен килнĕ çыру» ярăмран)*

**1 е. п.** Тепĕр халалне пиçĕ чĕлхепе каланă, çавăнпа сăвă йĕркисем вулаканăн чунне тивеççĕ.

**Митта сăнарĕ:**

Ман пурлăхăм чух, пин ылтăнăм çук,

Нумай кирлĕ мар тăван пĕрле чух.

Нумай та пĕтет, сахал та çитет,

Тату пурнăçа элле мĕн çитет?

Пурри вăл – пĕрле, çукки – çурмалла,

Тата, тăвансем, мĕнле пулмалла?

Ăс патăр ватти, вăй патăр яшши.

Этем, этеме ан пул ытлашши…

*(Митта Ваçлейĕ «Анатри юрă» сăвăран)*

**2 е. п.** Геннадий Федорович Трофимов (Юмарт) ăсчах хăйĕн статйинче çапла палăртать: *«Митта пире çынлăхлă пулма çеç мар, ытти енчен те пархатарлă пулма халалласа хăварнă. Поэзире те, критикăра та вăл пурнăç чăнлăхĕшĕн çирĕп тăнă. Ахальтен мар поэт Александр Алкан «Хамăр ялсем» поэмине тишкернĕ май «Пурнăç чăнлăхĕ» ятпа çивĕч статья çырнă. Çырав ăсталăхĕ, чăвашлăх, тирпейлĕх-управ, сăпайлăх, танлăх тата ытти çинчен те Митта асра юлакан шухăшсем каласа хăварнă. Вĕсем çитĕнекен ăрăва вĕрентес ĕçре усă курмалли паха хатĕрсем шутланаççĕ. Çавăнпах ĕнтĕ çыравçăн чылай хайлавне вăтам шкул программине кĕртнĕ. Кунта унăн сăввисем те, поэмисем те, статйисем те пур. Акă ачаш ача пек, пуса каччи пек, çулри юлташ пек Атăл сăнарĕпе паллашатăн та ăна нихăçан та манмастăн. Çакăн пек вичкĕн*

*сăнарсем Митта çырнинче чылай тĕл пулатăн. Вĕсем чăваш çыннин чун хавалне ăшăтса, пуянлатса тăраççĕ».*

**1 е. п.** 1954 çул вĕçĕнче поэта тӳрре кăлараççĕ. Митта тунсăхласа çитнĕ хĕрӳ кăмăлпа каллех литература ĕçне пикенет.

**Митта сăнарĕ:**

Хĕнпе хĕрсе туптаннă сассăм
Каллех ян хурçă пек таса!..

*(«Тайăр» поэмăран)*

**2 е. п.** Малтан вăл литература консультанчĕ, унтан «Тăван Атăл» альманах секретарĕнче ĕçлет. Пĕр-икĕ çул хушшинче вăл кӳтсе çитнĕ чунри шухăш-кăмăла сăвăлама тытăнать, вĕсене кайран «Тайăр» поэма пек йĕркелет, статьясем пичетлет, хăйĕн сăввисемпе поэмисен пуххине кăларать, куçару ĕçне кӳлĕнет, Л. Толстойăн «Вăрçăпа мир» романне куçарса кăларас ĕмĕтпе пурăнать.

**1 е. п.** «Тайăр» поэмăра Тайăр кун-çулĕнчен ытла Миттан хăйĕн шăпи. Кунта тăван чĕлхе теми тĕп вырăнта.

**Митта сăнарĕ:**

Тăван чĕлхем! Таса хĕлхем
Парсам пăлхавлă чунăма.
Пар чăнлăх, савăнăç, илем,
Пар ирĕк – çутăрах çунма.
Ĕненнисемшĕн çул çинче
Эс – шанчăк çăлтăрĕ ялан.
Тискер тăманлă каçсенче
Йыхравлă чан пек янăран.
Çунат паратăн çамрăка,
Ватта чун канăçĕ кӳрен.
Сӳнсе кĕлленнĕ кăмрăка
Вут кайăк сывлăшĕ кĕртен.

*(Митта Ваçлейĕ «Тайăр» ярăмран)*

**2 е. п.** Геннадий Юмарт тĕпчевçĕ хăйĕн «Митта Ваçлейĕн çынлăхĕ» статйинче çапла çырать: *«…Тăван чĕлхе Митташăн – чăнлăх, савăнăç, илем, ирĕклĕх, шанчăк. Паллах, çакă вăл пĕтĕмпех уйрăм çыншăн çеç мар, халăхшăн та çапла, уйрăм çынпа халăхăн танлăхне, ирĕклĕхне пĕлтерет. Çак ыйту пирĕншĕн халĕ те калама çук çивĕч тăрать. Çавăнпа Митта тăван чĕлхе çинчен çыра-çыра хăварни пире наци тивĕçлĕхне ăнкарма пулăшать».*

**Митта сăнарĕ:**

«Мана тăван чĕлхепе калаçма çăмăлтарах, кунсăр пуçне, маншăн чĕлхе обществăри хутшăну хатĕрĕ çеç мар, чун-чĕре хистевĕсене йўнеçтерекен хатĕр те. Тăван чĕлхепе калаçнă чух, турра кĕл тума ларнă çын пек, эпĕ канса каятăп».

**1 е. п.** 1957 çул. Мартăн 6-мĕшĕ. Митта Ваçлейĕ хăйĕн кун кĕнекинче çапла çырса хăварать:

**Митта сăнарĕ:** Ĕнер 49 тултартăм. Тата çакăн чул пурăнсан çитет. Пурăнас кăмăл темĕн пысăкăш, анчах мехелĕ çавнашкал. Чĕре япăх. Пурнăç тиевне тапса туртни туйăна пуçларĕ.

«Ан тив, муталарĕ хура-хур,
Ан тив, ĕмĕт çитсех каймарĕ,
Çапах каламашкăн систев пур:
Çамрăк ĕмĕр ахаль иртмерĕ»

*(В. Митта сăнарĕ пўлĕмрен тухса каять)*

**2 е. п.** Нумай вăхăт тертлĕ пурăнса хавшанă сывлăхĕ поэта ĕмĕтленнĕ пек ытларах вĕçме памасть, 1957 çулхи июнĕн 10-мĕшĕнче ĕмĕтне сасартăк татать.

**1 е. п.** Митта Ваçлейĕн мăшăрĕ Нонна Кирилловна аса илĕвĕнчен

**Н. К. Еремеева-Митта сăнарĕ:** *«Ваçлей маншăн çутă çурçĕр çăлтăрĕ пек çеç курăнса юлнăн туйăнать. Ахăр саманара унăн ĕмĕрĕ кĕске пулчĕ. Анчах та вăл чăваш халăх историйĕнче хăйĕн пархатарлă йĕрне хăварчĕ. Унпа пĕрле пулнă вăхăта пысăк телей тесе шутлатăп. Василий Егорович пурнăçа юратакан, тăван халăхшăн, унăн культуришĕн, чăваш чĕлхишĕн çунсах çĕре кĕчĕ. Ку тĕлĕшпе Митта пурнăçĕ, ĕçĕ-хĕлĕ пирĕншĕн пуриншĕн те лайăх тĕслĕх пулса тăрать. Унăн чунĕ кристалл пек тасаччĕ. Вăл яланах писательсен, композиторсен, художниксен, артистсен, культура ĕçченĕсен*

*вăйне пĕр çĕре пĕрлештерессишĕн тăрăшатчĕ. Вăл лайăх ĕçлекен çынсем умĕнче яланах пуçне таятчĕ, ырришĕн пĕтĕм чун-чĕререн савăнатчĕ».*

**Илемпи** *(поэтăмăр хĕрĕ аса илĕвĕнчен): «Эпир, виçĕ хĕр, аттепе юнашар пурăнса ÿсеймерĕмĕр, çавăнпа та ун çинчен сахал пĕлетпĕр. Çав сăлтава пулах чăвашла та лайăх вĕренеймерĕмĕр.*

Сцена çинчи пианинона Илемпи пырса уçать, выляна пек тăвать (çав хушăра Генрик Венявскин «Полонез «Прощание с Родиной» кĕввине шăппăнрах яма юрать).

*1957 çулхи апрель уйăхĕнче атте пианино туяннă та ун çинчен мана çыраса пĕлтерчĕç. Эпир аппапа иксĕмĕр тахçантанпах уншăн тĕмсĕлеттĕмĕр. Тÿссе тăраймарăм – хыпар илсенех киле персе çитрĕм. Хальхинче эпĕ атте музыкăна питĕ хаклама пĕлнине ăнлантăм. Вăл классиксен музыкине чăннипех ăша хурса йышăнать, пианино умне те час-часах юрă-кĕвĕ калама ларатчĕ. Ун пек чух вара килте чуна çĕклентерекен тăван чăваш юррисем янăраса каятчĕç. Уйрăлу умĕн мана вăл Огиньскин «Полонезне» каласа пама ыйтрĕ. Çакă пирĕншĕн сывпуллашу полнозĕ пулса юлчĕ - уйăхран аттем çĕре кĕчĕ».*

**2 е. п.** Шел пулин те, Митта Ваçлейĕ пин юрă-сăвă таран çырса хăвараймарĕ. Анчах сăвăсене шутпа кăна хисеплемеççĕ. Вулакана Митта хайлавĕсенчи ытарайми илем илĕртет. Вăл чăваш литературипе культуринче паллă йĕр хăварчĕ. Ун ячĕпе республикăра литература премине йĕркеленĕ, шкулсемпе библиотекăсем, культура учрежденийĕсем Митта ячĕпе хисепленеççĕ.

**1 е. п.** Митта Ваçлейĕн фончĕн тÿпи те пысăк, ун ертÿçи – Илле Арсентьевич Иванов. Çак пултарулăх канашĕ Чăвашлăха аталантарса пырассишĕн чунне парать. Фонда 1983 çулта шăпах вăл пуçарнипе йĕркеленĕ. Унтанпа лауреатсен шучĕ аллăран та иртнĕ. Кам кăна çук пуль вĕсен хушшинче: Тимĕр Акташ, Петĕр Эйзин, Геннадий Айхи, Клара Чекушкина, Марина Карягина, Борис Борлен, Атнер Хусанкай, Василий Павлов, Надежда Кириллова, Ева Лисина тата ыттисем те. Пĕринчен тепри маттуртарах!

**2 е. п**. Поэт тусĕ Геннадий Айхи Митта премине илнĕ хыççăн çакăн пек йĕркесем шăрçалана:

Ак, туссем, пĕрле ларатпăр,
Кĕр-кĕрлетпĕр пĕр йышра.

Миттапа пĕрле туятпăр
Пĕр килти пек хамăра.
Çĕнчĕ йăлт Ваçлей пиччемĕр,
Иртнĕ – манăçми хĕн-хур.
Ĕнтĕ халĕ, тăвансемĕр,
Унăн Премийĕ те пур.
… Янăрать Митта металĕ
Çулсерен янравлăрах.
Унăн Премийĕ, Халалĕ, -
Вăл та пултăр – халăхпах!

*( Г. Айхи «Митта премине илнĕ хыççăн каланă сăмах»)*

**1 е. п.** Çапла вара, XX ĕмĕр пуçламăшĕнче туптаннă Митта Ваçлейĕн пултарулăхĕ вулаканăн кăмăлне тыткăна илет, унăн чунĕнче ăшă та çутă шухăш–туйăм çуратать. Поэт ырă ячĕ чăваш халăх историне ĕмĕрлĕхе кĕрсе юлчĕ.

**Усă курнă литература**

Кĕнекесем

Митта Ваçлейĕ пурнăçĕпе пултарулăхĕ / Г. Юмарт пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке издательстви, 1974. – 176 с.

Митта, В. Е. Çак юрра эп ахаль мар юрларăм : сăвăсем, куçарусем / В. Е. Митта. – Шупашкар, 1990. – 173 с.

Митта, В. Е. Кăмăлăмпа шухăшăм / В. Е. Митта. – Шупашкар : Чăвашгосиздат, 1959. – 386 с.

Митта, В. Е. Кăмăлтан : сăвăсем / В. Е. Митта. - Шупашкар : Чăвашгосиздат, 1956. – 152 с.

Митта, В. Е. Кĕрхи илем : сăвăсем, поэмăсем / В. Е. Митта. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке издательстви, 1978. – 144 с.

* * *

Давыдов-Анатри, В. И. Митта в моей памяти : повесть-воспоминание / В. Давыдов-Анатри ; [пер. с чуваш. И. Митта]. – Чебоксары, 2003. – 56 с. : портр., фот.

Митта, В. Е. Думы мои, мечты мои : стихи и поэма / В. Е. Митта ; пер. с чуваш. Г. Фролова. – М. : Современник, 1976. – 63 с.

**Статьясем**

Юхма, М. Тĕпренсе кайнă чĕре // Аваллăх арчинчи ахах / М. Н. Юхма. – Шупашкар, 1997. – С. 16-22.

Ахрат, И. Музыка – Митта Васлейĕн пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕнче // Çул юхать, юхать… / И. Ахрат. – Шупашкар, 2000. – С. 154–159.

Айăпсăр синкер курнисем : [Митта Васлейĕн кĕске биографийĕ] / П. Ялгир хатĕрленĕ // Ялав. – 1989. - № 4. – С. 17.

Аршуткин, Н. «Мĕн чухлĕ çутă ĕмĕт сая кайрĕ» / Н. Аршуткин // Хыпар. – 2005. – 28 раштав.

Егоров, В. Пирĕн Митта : [В. Митта çинчен ытти сăвăçсем мĕн каланине тишкерни] / В. Егоров // Чăваш ен. – 1998. – 6-13 июнь (№ 22). – С. 5.

Дмитриев, В. Ăшă куçлăччĕ, кăмăллă сăн-питлĕччĕ : (Митта Васлейне асăнса) / В. Дмитриев // Тантăш. – 1997. – 4 ака. – С. 4.

Илпек, М. Сăваплă ят : [Митта Васлейĕ çинчен] / М. Илпек // Чăваш ен. – 1998. – 15-28 ака (№ 15). – С. 5.

Митта, И. Аттем çинчен : [хĕрĕ аса илни ] / Илемпи Митта // Хыпар. – 1998. – 5 пуш. – (Сăваплă ят : «Хыпар» кĕнеки. – С. 13).

Петров, К. Хĕвеллĕн çуталать Митта : çуралнăранпа 90 çул çитес умĕн / К. Петров // Хыпар. – 1998. – 13, 18 нарăс.

Сениэль, М. Ссылкăри Митта : [сăвă] / М. Сениэль //Ялав. – 1996. – 3 №. – С. 49.

Хлебников, Г. Поэтсен туслăхĕ / Г. Хлебников // Çамрăксен хаçачĕ. – 2007. – 16 кăрлач (№ 6). – С. 11.

Эсрел, С. Ырă кăмăллăччĕ : [Митта Васлĕйĕ çуралнăранпа 90 çул çитнĕ май] / С. Эсрел // Канаш. – 1998. – 28 нарăс.

Юмарт, Г. Этем, этеме ан пул ытлашши : Митта Ваçлейĕ çуралнăранпа – 85 çул / Г. Юмарт // Хыпар. – 1993. – 5 март.

Юмарт, Г. Сумлăрах чыслар : [Митта Ваçлĕйĕ çуралнăранпа 90 çул çитнĕ май] / Г. Юмарт // Авангард (Патăрьел районĕ). – 1997. – 13 çу.

Юмарт, Г. Çитеймен ĕмĕтсем : Митта Ваçлеĕ вилнĕренпе 40 çул çитнĕ май / Г. Юмарт // Хыпар. – 1997. – 10 çĕртме.

Юмарт, Г. «Çак юрра эп ахаль мар юрларăм…» : Митта Ваçлейĕ çуралнăранпа 90 çул çитнĕ май / Г. Юмарт // Çилçунат. – 1998. – № 3-4. – С. 38.

Юмарт, Г. Митта Ваçлейĕн палăкĕ : сăвă / Г. Юмарт // Çилçунат. – 1998. – № 5. – С. 5.

Юмарт, Г. Митта Ваçлейĕ çуралнăранпа – 90 çул / Г. Юмарт // Канаш. – 1998. – 28 нарăс.

Юмарт, Г. Çĕршыв эмелĕ, илем тӳлемĕ : [Митта Ваçлĕйĕ «Хыпар» хаçатпа туслă пулни çинчен] // Хыпар. – 1998. – 21 кăрлач.

Юмарт, Г. Митта Ваçлейĕн çынлăхĕ / Г. Юмарт // Тăван Атăл. – 2000. – № 3. – С. 68-71.

Юмарт, Г. Хăямата янисене ан манăр… / Г. Юмарт // Çамрăксен хаçачĕ. – 2005. – 3 чӳк (№ 44). – С. 5.

* * *

Афанасьев, П. Митта Василий Егорович // Писатели Чувашии / П. Афанасьев. – Чебоксары, 2006. – С. 269–271.

Алексин, В. О поэте с грустью и любовью / В. Алексин // Советская Чувашия. – 2002. – 15 марта.

Васильев, В. Такая знакомая фамилия Митта / В. Васильев // Советская Чувашия. – 2006. – 17 августа. – С. 6, 15.